# КАÇАР МАНА...

**Иртенпех лара-тăра пĕлмест Лена, чĕри те хыттăн тапа пуçларĕ. Пăлханма сăлтавĕ те пур: паян унăн савнийĕ салтакран таврăнать.**

Каçхине хĕр чӳрече çывăхне пырса ларчĕ, Коля килессе чăтăмсăррăн кĕтрĕ. Илемлĕ кăвак куçĕсем ыррине çеç шанса тӳпери çăлтăрсем пек йăлтăртатрĕç.

Акă такам ши! шăхăрчĕ. Лена, шухăша путнăскер, шарт сикрĕ те йăмра айĕнче салтак тăнине курах кайрĕ. Вăл урама васкаса тухрĕ. Ун умĕнче яштака та илемлĕ каччă тăрать, салтак тумĕ ăна питĕ килĕшет. Икĕ çул хушшинче Ленăпа Коля юрату çырăвĕсем çырсах тăчĕç. Лена ун çине куç илмесĕр пăхрĕ. «Юратусăм, тинех кĕтсе илтĕм, - йĕрсе ячĕ. — Сана юратнине сăмахпа та каласа пĕтерес çук. Тĕлĕкре те кураттăм». «Эсĕ мана кĕтессе шаннă эпĕ. Маллашне пĕрле пулăпăр», - хуравларĕ Коля.

Çамрăксем клубалла утрĕç. Коля килнĕ ятпа ташă каçĕ ирттереççĕ-мĕн. Çамрăксем кĕçех сырса илчĕç, салтак пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлчĕç. Лена хĕрсем еннелле утрĕ. Ташларĕ, юрларĕ хĕр хăйĕн юлташĕпе.

Пĕр Аня çеç айккинче ларчĕ. Вăл пурин çине те ăмсанса пăхрĕ. Аня Кольăна тахçантанпах килĕштерет, анчах çав туйăмсене никама та каламан. Ăшĕнче: «Ăна пур пĕр хам майлă çавăратăп», - тесе шутларĕ. Кĕçех вăл Лена çинчен суя сăмах сарчĕ.

Ташă хыççăн Коля Ленăна киле ăсатрĕ. Каллех тĕл пулма калаçса татăлчĕç.

Пике çĕрĕпех савни çинчен шухăшларĕ, пĕрле пуласса шанчĕ. Тепĕр кун Лена чун савние чăтăмсăррăн кĕтрĕ, анчах вăл килмерĕ. Аптăранă енне хĕр-тантăшĕсемпе клуба кайрĕ. Лена унта çитсен Коля Аньăпа чуп туни çине куççуль витĕр пăхса тăчĕ. «Епле-ха капла, мĕнлерех çырусем çыратчĕ ман пата, суя çырусем...» Лена клубран тухса чупрĕ.

> «Юратусăм, тинех кĕтсе илтĕм, - йĕрсе ячĕ. — Сана юратнине сăмахпа та каласа пĕтерес çук. Тĕлĕкре те кураттăм».

Коля лăпланаймарĕ çак каç, иккĕленӳ чунне вупăр пек кăшларĕ. «Епле савниçĕм ют ял каччисемпе çӳреме пултарнă? Суя сăмах пулĕ ку! Анчах Аня улталакан хĕр мар. Мĕншĕн-ха эпĕ ăна чуп турăм? Тьфу! Ленăна кӳрентерес тесе мĕнлерех йăнăш турăм. Тем тесен те, тĕрĕс мар. Халех манăн Ленăпа курса калаçас пулать. Йăлтах, йăлтах ыйтса пĕлмелле...» - шутларĕ вăл.

Çамрăк Лена пурăнакан çурт тĕлне çитрĕ. Чӳречерен хуллен шаккарĕ. Лена урама тухрĕ. «Мĕн тума килтĕн. Урăххисем хăваларĕç-им?»— ыйтрĕ хĕр сиввĕн. «Кала тĕрĕссине, ют ял каччипе çӳренĕ-и?»— ыйтрĕ яш. Тинех хĕр мĕн пулса иртнине ăнланчĕ. «Çук, Коля. Эпĕ ун пек мар. Сансăр пуçне никама та килĕштерместĕп. Малашне те çын сăмахĕсене ăша хыватăн пулсан кайма пултаратăн»,- хуравларĕ хĕр. «Каçар. Аня сăмахĕсем пуça пăтратрĕç. Сансăр пуçне никам та кирлĕ мар». Çамрăксем пĕр-пĕрин ытамне лекрĕç.

Чăн та, кĕтме, каçарма пĕлекенсем — телейлĕ.

*АВРОРА*




# ÇАМРĂК ГЕНИЙ



**Мускав шкул ачи çĕнĕ ăрури авиадвигатель шутласа кăларнă. Çак хатĕр Мускав çумĕнчи Жуковскире тин кăна иртнĕ авиакосмос салонĕнче специалистсене питĕ тĕлĕнтернĕ.**

Иван Касьянов — шкулти изобретатель. Вăл нумаях пулмасть халăхсен хушшинчи авиакосмос салонĕнче принципла çĕнĕ двигателлĕ истребитель-самолет кăтартнă. Вăл шутласа тупнă принципа пурнăçа кĕртнĕ. Унăн ноу-хау — ядерлăхимиллĕ двигатель. Çак двигательсем малтан та пулнă ĕнтĕ, анчах та пĕрле пулман. Пĕрлештерни хăвăрт-лăхпа туртăма чылай пысăклатнă.

# ШКУЛТА — СУЙЛАВ

**Чӳк уйăхĕн 20-мĕшĕнче Калайкасси шкулĕнче «Айсберг» ача-пăча пĕрле-шĕвĕн президентне суйларĕç.**

Суйлава 6 шкул ачи хăйĕн кандидатурине тăратнă: Женя Евдокимов /9 класс/, Алиса Бабушкина /10 П класс/, Анастасия Алексеева /10 С класс/, Мария Николаева /11 А класс/, Анастасия Григорьева /11 П класс/ тата Никита Львов /11 С класс/.



Суйлав списокĕнче пурĕ 225 çын. Вĕсенчен 160-ĕ хăйсен гражданла тивĕçе пурнăçланă.

Суйлав бюллетенĕсене шутласа пĕтĕмлетнĕ май çакна калама пулать: «Айсберг» ача-пăчасен пĕрле-шĕвĕн президентне 11 С класĕнче вĕренекен Никита Львов суйланнă. Уншăн 44 процент шкул ачи сасăланă.

*Ӳкерчĕк çинче «Айсбергăн» çĕнĕ президенчĕ.*





# КУÇМА ПАЙРАШ ÇУРАЛНĂРАНПА 100 ÇУЛ

**Илемлĕ хайлавсен ăсти, сăвăç, драматург, паллă хирург Муркаш районне кĕрекен Вускасси — Акуча ялĕнче 1906 çулта çуралнă.**

Юбилей тĕлне Сăпай шкул коллективĕ те, ачасем те, паллă çынсем те, К.Пайраш тăванĕсем те тĕплĕн хатĕрленнĕ. Акă сăмахран, пирĕн Калайкасси шкул вĕрентекенĕ Евгений Евстафьевич Ерагин «Куçма Пайраш — çыравçă-врач» кĕнеке кăларнă. Ку кĕнекене хатĕрлеме вăл пысăк материал пухнă.



Вĕренекенсем хăнасене юрă-ташăпа кĕтсе илчĕç. Тӳрех тенĕ пек акт залĕнче савăнăçлă пуху пуçланчĕ. Кузьма Пайраша асăнма Виталий Станьял (тĕпчевçĕ, таврапĕлӳçĕ, чĕлхеçĕ, сăвăç), Светлана Асамат (литература музейĕн директорĕ), Петĕр Ялкир (паллă сăвăç) тата ыттисем килчĕç.

Юбилейра паллă çыравçăна халалласа ирттернĕ шкул ачисен сочиненисен конкурсне те пĕтĕмлетрĕç. Çĕнтерӳçĕсем — 8 классра вĕренекен Катя Яковлева тата Дима Мешков, 9 классра вĕренекен Люба Кожанова. Вĕсем Пайраш çемьинчен чаплă парнесем илчĕç.

Уява шкул ачисем концерт лартса илем кĕртрĕç. Вĕрентекенсем те ачасенчен кая юлмарĕç.

Унсăр пуçне шкулта паллă ентешпе çыхăннă вĕренекенсен тĕпчев ĕçĕсем, вăл çырнă кĕнекесен куравĕ иртрĕ. Кунтах çыравçăн çемьинче упранакан архиври чăнлавсемпе (документсем) паллашма май пулчĕ. Оля КОШКИНА,

Калайкасси шкулĕ,

9-мĕш класс

*Сăпай—Калайкасси*

# ИННОВАЦИ ШКУЛ АЧИСЕН ПУРНĂÇ ÇУЛНЕ УÇСА ПАРАТЬ

**Канашри каçхи шкулăн педагогика коллективĕ вĕрентес ĕçре кивĕ меслетсемпе мала каяйманнине лайăх ăнланса вĕрентӳ процессне инновацисемпе çĕнĕ технологисем кĕртме тăрă-шать.**

Кăçал 9-мĕш класра «Ĕç шыравĕн технологийĕсем» ятлă факультативлă курс уçăлчĕ. Çак курс программи вĕренекенсене ĕç рынокĕн уйрăмлăхĕсемпе, ĕç шыравĕн активлă ĕлкисемпе, ĕçпе тивĕçтерекене хăвна мĕнле кăтартмаллипе паллаштарать. Çĕнĕ предмета — Елена Трофимова — социаллă педагог вĕрентет. Вăл ĕнентернĕ тăрăх, çак курс ачасене хăйĕн мехелне, профессиналлă тата социаллă кирлĕлĕхĕпе пĕлтерĕшне ĕненме пулăшать. Паян парта хушшинче ларакан ача ыран ĕç шыракан çын пулса тăрать.

Акă, 10-мĕш класра «Предложение и спрос на рынке труда» темăпа урок иртрĕ. Шкул ачисем вĕрентекене кăсăклансах итлеççĕ. Социаллă педагог ачасене экономикăн кăткăс ăнлавĕсене паянхи лару-тăрупа тата тĕслĕхсемпе ăнлантарса пачĕ. Урокра ĕçпе тивĕçтерес ыйтăва та пăхса тухрĕç.

Ачасем хăйсем те аякра юлмарĕç — проблемăна татса памалли мелсем сĕнме пуçларĕç, ашшĕ-амăшĕсене тĕслĕх пек илсе пачĕç. Дискусси-тупăшу меллĕ те ăнăçлă пулчĕ.

Хамăр инф.

# ЭЛЬБАРУСОВО ШКУЛĔНЧИ ТРАГЕДИЕ АСĂНСА

**Чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Эльбарусово шкулĕнче 45 çул каялла хăрушă пушарта çĕр ултă ача тата тăватă вĕрентекен çунса кайнине асăнса Республика шайĕнче çамрăк пожарнăйсен дружинисем хушшинче пушартан çăлас спорт ăмăртăвĕсем пулчĕç.**

Ăмăрту «Промтрактор-Промлит» спорт манежĕнче иртрĕ. Вăл — Шупашкарта 12-мĕш хут.

Куçакан кубока — тĕп трофея — çĕнсе илме республикăри пур районпа хула хутшăнчĕ. Пурĕ 19 команда, 190 çын. Кӳршĕ регионсенчен те — Тутарстанпа Мари Элтан та — хăнасем пулчĕç, ăмăртăва хутшăн-чĕç. Мероприятие ЧР Чрезвычайлă лару-тăру министерствин начальник çумĕ, шалти хĕсмет полковникĕ А. В. Махов уçрĕ. Йышăннă йăла тăрăх пушарта çунса кайнисене асту-са минут хушши шăп тăчĕç.

Ăмăрту условийĕсемпе килĕшӳллĕн командăсене 3 ӳсĕме пайларĕç. Кĕçĕн ушкăнра 12-13 çулхи, вăтам ушкăнра — 14-15 çулхи, аслă ушкăнра — 16-17 çулхи спортсменсем пулчĕç. Çамрăк пожарнăйсем пушарпа кĕрешекенсен спортĕнчи 100 метр тăршшĕ чару полосине вăхăтпа чупрĕç, условлă пушара сӳнтерме рукав линие тăсрĕç, вĕренӳ башни чӳречине



штурм пусмипе улăхса кĕчĕç. Çак кăткăс задачăсене хăвăртлăхпа кăна мар, тĕрĕс те пурнăçламалла. Кашни элементшăн тӳресем /жюри/ балсем лартрĕç. Спортсменсем профессионалсем пулнине, тăрăшса вĕреннине кăтартрĕç. Çавăнпа та призшăн хĕрӳ ăмăрту пычĕ. Результатсем пĕр-пĕринчен çеккунт пайĕсемпе кăна улшăнса тăчĕç. Лидера Шупашкарти çамрăк пожарнăйсен дружини, 2-мĕш вырăна — Çĕнĕ Шупашкарсем, 3-мĕшне — Йĕпреçсем тухрĕç.

Хамăр инф.

# ЭПИР — СЫВĂ ПУРНĂÇШĂН!

**Чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнче Калайкасси вăтам шкулĕнче «Эпир сывă пурнăçшăн» ыркăмăллăх акцийĕ иртрĕ. Унăн тĕллевĕ — наркотика, пируса тата эрех-сăрана сивлесси, ачасене çак усал япаласенчен аякка пăрасси.**



Мероприятие 1-11 класра вĕренекенсем хутшăнчĕç: пĕрисем — ӳкер-чĕксем, теприсем — плакатсем ӳкерчĕç, виççĕмĕшсем — сывă пурнăçа сцена çинчен рекламăларĕç. Плакатсем хушшинче ирттернĕ конкурсра 9-мĕшсен «Пурнăçа тĕрĕс суйласа ил» ĕçĕ мала тухрĕ. Сывă пурнăçа рекламăлас енре те вĕсемех пĕрремĕшсем пулчĕç. Матурсене шкул чысне хӳтĕлеме Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче иртекен район ăмăртăвне кайма шанчĕç. Хăйсен пултарулăхне çӳллĕ шайра кăтартрĕç 9-мĕшсем.

*Оля КОШКИНА,*
*9-мĕш класс*

*(Ӳкерчĕк çинче агитспектакльти пĕр сцена)*